Муниципальное бюджетное общеобразовательное учреждение
«Большебисяринская начальная общеобразовательная школа – детский сад»
Тетюшского муниципального района Республики Татарстан

ДОКУМЕНТ ПОДПИСАН ЭЛЕКТРОННОЙ ПОДПИСЬЮ

СВЕДЕНИЯ О СЕРТИФИКАТЕ ЭП

Сертификат: 00E82017E1D2FB1570DD78ABA0C9496D09
Владелец: Курмышкина Ирина Николаевна
Действителен с 07.04.2023 до 30.06.2024

«УТВЕРЖДЕНО»
Директор:

________И.Н.Курмышкина

Приказ № 23

от «21» августа 2023г.

**Рабочая программа**

**учебного предмета «Родной(чувашский) язык»**

**2 класс**

Принято на заседании
педагогического совета
протокол № 1от 21.08. 2023г.

2023 г.



ЭЛЕКТРОННЫЙ ТАТАРСТАН

## 1.Умĕн ăнлантарни

***Рабочая программа по родному языку составлена на основе:***

- Основной образовательной программы начального общего образования МБОУ «Большебисяринская НОШ – детский сад» Тетюшского муниципального района РТ;

-Учебного плана Муниципального бюджетного общеобразовательного учреждения «Большебисяринская начальная общеобразовательная школа – детский сад» Тетюшского муниципального района РТ на 2023-2024 учебный год .

Çамрăк ăрăва ăс-тăн парса ÿстерес ĕçре пуçламăш шкул пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк.

Вĕрентÿ ăс-тăн пару никĕсĕ, унăн тĕп инструменчĕ – тăван чĕлхе. Тин çеç кĕнеке тытнă ачана ăнăçлă вĕрентсе ăс-тăн парасси чи малтан вăл хăйĕн тăван чĕлхипе тухăçлă усă курма пултарнинчен килет. Тăван чĕлхе – ÿсекен этеме çут тĕнчене кĕмелли алăкăн ылтăн çăраççийĕпе пĕрех.

Çак асамлă çăраççипе ача вĕренÿре туллин усă курма пултартăр тесен унăн пуплевĕпе шухăшлавне пур енлĕн аталантармалла. Кĕске тапхăртах ăна çăмăллăн вулама, тăнласа ăнкарма, шухăша пуплевре уçăмлăн палăртма, çырма хăнăхтармалла: вĕренÿ кĕнекине вăл хăй тĕллĕн вулайтăр, вĕрентÿçĕ каласа панине лайăх ăнланма, асăмлама, асăнлама пултарайтăр, çавăн пекех унăн калаçу хăнăхăвĕпе çыру мехелĕ çителĕклĕ пулччăр. Çакна тума шăпах ĕнтĕ тăван чĕлхене 1-4 классенче ятарлă программăпа туллин вĕрентни пулăшать.

Тăван чĕлхе вĕрентесси виçĕ пайран тăрать:

1) вулама-çырма вĕрентесси;

2) вулавпа çыхăнуллăн пуплеве аталантарасси;

3) пуплеве пур енлĕ аталантарнă май чĕлхе пулăмĕсемпе ансат паллаштарасси, пуплеве тишкерме вĕрентесси.

Çак виçĕ пая пуплеве аталантарас тĕллев пĕрлештерсе тăрать. Çапла вара, тăван сăмахлăха вĕрентни кирлĕрен те кирлĕ ăслайсемпе хăнăхусене аталантарса çирĕплетессипе тÿррĕнех çыхăнмалла. Çав ăслайсемпе хăнăхусем шутĕнче – ăнланса вуласси тата тăнласси, çыхăнуллă калаçасси, çырасси. Çавăнпа пĕрлех ачасене чĕлхе ăслăлăхĕпе литература пĕлĕвĕн ансат ăнлавĕсемпе паллаштарнă май вĕсен харпăр хăйĕн тата юлташĕсен пуплевне сăнас, чĕлхе илемне туйса ăна тарăнрах пĕлес туртăмне амалантармалла. Пĕтĕм халăх усă куракан литература чĕлхин сасă тытăмĕпе, сăмах пуянлăхĕпе, морфологи тата синтаксис мелĕпе паллаштарнă хушăрах вĕсене вырăнти калаçу уйрăмлăхĕсене курма та вĕрентмелле.

Ача пуплевĕнчи тĕп ĕç-хĕлсене (тăнлассине, калаçассине, вулассине, çырассине) аталантарса пынипе пĕрлех тăван чĕлхе вĕрентнĕ чух пуçламăш шкулта çакăн пек пысăк та **пархатарлă тĕллевсене**пурнăçламалла:

- вĕренекенсен çынлăх туйăмĕсене вăйлатмалла, пурнăça юратма, ырра шанса тăма тата хăйсене та ырă кăмăллă, сăпайлă пулма хăнăхтармалла;

- ачасен таврари пурнăç, этемпе çут çанталăк çинчен мĕн пĕлнине анлăлатмалла;

- вĕрентӳ ĕç-хĕлне лайăхрах хăнăхтарса, унăн ăслайĕсене «алла илме» май паиалла; вĕренӳ вăхăчĕпе перекетлĕ усă курма, харпăр хăй тĕллĕн ĕçлессин ансатрах мелĕсене чухлама вĕрентмелле;

- тăрăшуллă та тимлĕ вĕренме, пĕлӳпе пурнăç тĕслĕхĕсен çăл куçĕпе – кĕнекепе кăсăкланма хăнăхтармалла.

Программăри вĕренӳ материалĕпе вĕрентӳ меслечĕсем ачасене çирĕп пĕлӳсемпе ăслайсем, кирлĕ хăнăхусем паччăр тесен дидактикăн тĕп принципĕсене асра тытса вĕренӳ ăнланулăхĕпе кăсăклăхне, çыхăнулăхĕпе тĕллевлĕхне ялан пурнăçласа пымалла.

## 2. Предмета хак пани

Пуçламăш классенче ачан пуплевĕпе ăс-тăнĕ кашни урокрах аталанса пырать. Çак ĕçре тăван чĕлхе урокĕсем уйрăмах паллă вырăн йышăнаççĕ. Ачан пуплевĕпе ăс-хакăлне аталантарнипе пĕрлех тăван чĕлхе урокĕсем ăна пуçласа хутла вĕрентеççĕ. Вулама-çырма пĕлни вара – вĕренӳ никĕсĕ.

Ача пуплевĕнчи тĕп ĕç-хĕлсене (тăнлассине, калаçассине, вулассине, çырассине) аталантарса пынипе пĕрлех тăван чĕлхе вĕрентнĕ чух пуçламăш шкулта çакăн пек пысăк та пархатарлă тĕллевсене пурнăçламалла:

- вĕренекенсен çынлăх туйăмĕсене вăйлатмалла, пурнăçа юратма, ырра шанса тăма тата хăйсене те ырă кăмăллă, сăпайлă пулма хăнăхтармалла;

- ачасем таврари пурнăç, этемпе çут çанталăк çинчен мĕн пĕлнине анлăлатмалла;

- вĕсен çыхăнуллă тата сăнарлă шухăшлавĕпе ăсне, асăмлас хевтине аталантармалла;

- вĕрену ĕç-хĕлне лайăхрах хăнăхтарса, унăн ăслайĕсене «алла илме» май памалла; вĕренъ вăхăчĕпе перекетлĕ усă курма, харпăр хăй тĕллĕн ĕçлессин ансатрах мелĕсене чухлама вĕрентмелле;

- тăрăшуллă та тимлĕ вĕренме, пĕлъпе пурнăç тĕслĕхĕсен çăл куçĕпе – кĕнекепе кăсăкланма хăнăхтармалла

Программăри вĕрену материалĕпе вĕренту меслечĕсем ачасене çирĕп пĕлусемпе ăслайсем, кирлĕ хăнăхусем паччăр тесен дидактикăн тĕп принципĕсене асра тытса вĕренъ ăнланулăхĕпе кăсăклăхне, çыхăнулăхĕпе тĕллевлĕхне ялан пурнăçласа пымалла.

## 3. Вĕрентӳ предмечĕн вĕрентӳ планĕнчи вырăнĕ

Çирĕплетнĕ вĕрентӳ планĕ пуçламăш шкулта чăваш чĕлхипе литература вулавне вĕрентме пуре 405 сехет уйарна. Весенчен 1 класс 99 сехет (эрнере 3 сехет, 33 эрне). 2 классра 102 сехет. Чаваш челхи валли 2 сехет, литература - 1 сехет эрнере (эрнере 3 сехет, 34 эрне), 3 класра эрнере 3 сехет уйăрнă. Пурĕ çултаăкра 3 класра 102 сехет палăртнă. Чаваш челхи валли 2 сехет, литература - 1 сехет эрнере. 4 класс -102 сехет. Чаваш челхи валли 2 сехет, литература - 1 сехет эрнере (эрнере 3 сехет, 34 эрне).

## 4.Тăван чĕлхе вĕренту предмет тытăмĕн пахалăх ориентирĕсем

Çамрăк ăрăва ăс-тăн парса устерес ĕçре пуçламăш шкул пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк.

Вĕренту ăс-тăн пару никĕсĕ, унăн тĕп инструменчĕ – тăван чĕлхе. Тин çеç кĕнеке тытнă ачана ăнăçлă вĕрентсе ăс-тăн парасси чи малтан вăл хăйĕн тăван чĕлхипе тухăçлă усă курма пултарнинчен килет. Тăван чĕлхе – усекен этеме çут тĕнчене кĕмелли алăкăн ылтăн çăраççийĕпе пĕрех.

Çак асамлă çăраççипе ача вĕренъре туллин усă курма пултартăр тесен унăн пуплевĕпе шухăшлавне пур енлĕн аталантармалла. Кĕске тапхăртах ăна çăмăллăн вулама, тăнласа ăнкарма, шухăша пуплевре уçăмлăн палăртма, çырма хăнăхтармалла: вĕрену кĕнекине вăл хăй вулайтăр, вĕрентуçĕ каласа панине лайăх ăнланма, асăмлама, асăнлама пултарайтăр, çавăн пекех унăн калаçу хăнăхăвĕпе çыру механизмĕ çителĕклĕ пулччăр. Çакна тума шăпах ĕнтĕ тăван чĕлхене 1-4 классенче ятарлă программăпа туллин вĕрентни пулăшать.

## 5. Кĕтекен результатсем

«Вĕренĕвĕн Универсаллă Действийĕ» (ВУД) вулав

Ку термина пĕтĕмшле илсен вĕренӳ ăслай тесе ăнланмалла, урăхла каласан, ВУД вăл - субьект унăн социаллă опыта ăнланса тата хастаррăн ăса хывнă май хăй т\лл\нех аталанма пултарни. Вĕренекен харпăр хăй тĕллĕнех çĕнĕ пĕлӳсене ăнăçлă ăса хывма, ăслайсемпе компетентноçсене калăплама (çав вăхăтра вĕренӳ ăслайне те) пултарнин никĕсĕнче – универсаллă вĕренӳ действийĕсем. Çапла вара вĕренӳ ăслайне ăса хывасси вĕренекенĕн вĕренӳ ĕç-хĕлĕн мĕн-пур компоненчĕсене туллин ăса хывмаллине пĕлтерет. Ку компонентсем шутне çаксем кĕреççĕ: пĕлӳсем туянас (познавательные) тата вĕренӳ мотивĕсем, вĕренӳ тĕллевĕ, вĕренӳ задачи, вĕренӳ ĕçĕсемпе (учебные действия) операцийĕсем, ориентировка, материала урăхлатни (преобразование материала), тĕрĕслев тата хаклав. Вĕренес ăслай – ачасем предметлă пĕлӳсене ăса хывассин, ăслайсемпе компетенцисене калăплассин тухăçлăхне ӳстермелли тĕп факторсенчен пĕри.

Вĕренĕвĕн Универсаллă Действийĕсен тĕп функцийĕсем: вĕренекенĕн харпăр хăй тĕллĕнех пĕлӳсем туянас, вĕренӳ тĕллевĕсене лартас, тивĕçлĕ хатĕрсем шыраса тупса вĕсемпе усă курас, ĕç-хĕл юхăмĕпе результачĕсене тĕрĕслес тата пахалас майсене тупма пулăшасси;

харкамлăха килĕшӳллĕн аталантармалли условисем туса парасси; пĕлӳсене ăнăçлăн ăса хывассин, ăслайсене, хăнăхусене тата компентноçсене калăпласа çивĕчлетессин тухăçлăхне ӳстересси;

Вĕренӳ ĕçĕсен универсаллăхĕ çакăнта курăнать. Вĕсем предмет шайĕнчен тухса метапредмет шайне хăпараççĕ; харкамлăхăн пĕтĕмĕшле культура, харкам, пĕлӳсем туянас тата тĕллĕнех аталанассине пĕрлĕхлĕн тарăнлатма май параççĕ; пĕлӳсем туянас юхăмăн пур шайĕсене те пĕр тĕвве çыхăнтарма май параççĕ; ача-пăчан вăл е ку ĕç-хĕлне йĕркелессин тата асăрхассин никĕсĕ пулса тăраççĕ.

Вĕренĕвĕн Универсаллă Действийĕн ушкăнĕсем

Пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн тĕп тĕллевĕсемпе килĕшӳллĕн ВУД 4 ушкăнне уйăрма пулать: харкамлă (личностный), регулятивлă (саморегулятивлă та), пĕлӳсем туянас (познавательный) тата хутшăнуллă (коммуникативлă).

Харкамлă ВУДсем

Вĕренӳ ĕç-хĕлĕпе çыхăнтарса, харкамлă ĕçсен виçĕ тĕсне уйăратпăр:

1. Професси тĕлĕшĕнчен харкам вырăнне шырани.

2. Пĕлтерĕшлĕх (вĕренӳ тĕллевĕпе сунăмĕ, е, урăхла каласан, вĕренӳ результачĕпе унăн кирлĕлĕхĕ хушшинчи çыхăнăва палăртни). Вĕренекенĕн хăйне çак ыйтăва памалла та ăна хуравлама пултармалла: «Мĕн тума тата мĕн тĕллевпе вĕренетĕп эпĕ?»

3. Кăмăл-сипетлĕх ориентацийĕ. Вĕренсе ăса хывакан содержание харкамлăх тата социаллă опыта кура мораль тĕлĕшĕнчен хаклани.

Регулятивлă ВУДсем

1. Мĕн пĕлнине тата мĕн пĕлменнине шута илсе вĕренӳ задачине палăртмалли тĕллеве лартни.

2. Ĕçсен йĕркин планне туни; вĕçĕнчи результата кура пайăр ĕçсен тĕллевĕсене палăртни.

3. Прогноз туни. Урăхла каласан, результата тата туянакан пĕлӳсен шайне малтанах курса тăни.

4. Ĕç майне тата унăн результатне малтанах палăртнă калăппа танлаштарса тĕрĕслени.

5. Коррекци - результата вĕренекен хăй, юлташĕсем тата учитель хаклавне кура плана тата ĕç майĕпе йĕркине улшăнусем кĕртни.

6. Хаклав – мĕне вĕреннине тата мĕне вĕренмеллине, вĕреннин шайĕпе пахалăхне вĕренекен хăй палăртни; ĕç результатне хаклани.

7. Саморегуляци – йывăрлăхсене çĕнтермелли майсене тупса палăртас пултарулăх.

Пĕлӳсем туянас ВУДсем

Кунта пĕтĕмĕшле вĕренӳ(1), паллăпа символ ĕçĕсене (2) логика вĕренӳ ĕçĕсене(3) тата ыйтăва лартса ăна татса панине(4) кĕртетпĕр. Вĕсене хăйсене çапларах вакласа яма пулать.

1. Пĕтĕмĕшле вĕренӳ универсаллă ĕçсем:

- пĕлӳсене туянас тĕллеве харпăр хăй тĕллĕнех уйăрса палăртни;

- пуçламăш шкулшăн шăл çемми ИКТ тата информацин ытти çăлкуçĕсемпе усă курса тивĕçлĕ информацие тупса уйăрни;

- пĕлӳсен тытăмне палăртни;

- сасăллă тата çыруллă пуплев ăслани;

- конкретлă условисенче задачăна шутламалли уйрăмах тухăçлă мелсемпе майсене суйласа илни;

- ĕç майĕсемпе условийĕсен рефлексийĕ, ĕç юхăмĕпе результачĕсене тĕрĕслени тата хаклани;

- вулав тĕллевне тата вулав тĕсне суйласа илме ăнланса вулани; тĕрлĕ жанрлă текстсене итлесе тивĕçлĕ информаци илни; тĕп тата иккĕмĕшле информацие палăртни; илемлĕ, ăслăх, публицистика тата официаллă ĕç стилĕсемлĕ текстсене ирĕклĕнех ăнланса йышăнни; массăллă информаци хатĕрĕсен чĕлхине ăнланса хак пани;

- проблемăна лартса калăплани, творчествăллă тата шыравлă проблемăсене татса панă чухне харкам тĕллĕнех ĕç алгоритмне туни.

2. Паллăпа символ ĕçĕсем:

- калăпсем туни – обьекта туйăм форминчен калăпа (уçлăхпа графика е паллăпа символ) куçарни;

- пĕтĕмĕшле законсене палăртас тĕллевпе калăпа юсаса урăхлатни.

3. Логика вĕренӳ ĕçĕсем:

- анализ - обьекта тĕп тата иккĕмĕшле паллисене кăтартас тĕллевпе сӳтсе пăрахни;

- синтез – пайсене пĕр çĕре пуçтарни, çав шутра сиксе юлнă пайсене хушни те;

- обьектсене танлаштармалли, ушкăнламалли критерисемпе никĕссене суйласа илни;

- ăнлав патне илсе çитерни, сăлтавпа тĕллев çыхăнăвĕсене кăтартни;

-рассуждениcен логикăллă сăнчăрне йĕркелени, çирĕплетсе каланин тĕрĕслĕхне сӳтсе явни;

- доказательство;

- гипотезăсем кăларса тăратса вĕсене сăлтавлани.

4. Ыйтăва (проблемăна) лартса ăна татса пани:

- ыйтăва лартни;

- творчествăллă тата шыравлă ыйтусене татса памалли майсене харкам тĕллĕн туни.

Хутшăнуллă ВУДсем

1.Учительпе тата тантăшсемпе хутшăнса вĕренессине планлани – кашни хутшăнаканăн тĕллевĕпе функцийĕсене, хутшăну майĕсене палăртни.

2.Ыйтусем лартни – информацие шырас тата пуçтарас ĕçе хастар хутшăнса хăюллăнах ыйтусем лартни.

3.Конфликтсене татса пани – проблемăна асăрхани, конфликта тепĕр майлă татса памалли майсене шырани тата пахалани, юрăхлă майпа усă курни.

4.Партнер хăтланчăкне (поведение) ертсе пыни – тĕрĕслени, тӳрлетни, унăн ĕçĕсене хаклани.

5.Харкам шухăшсемпе сунăмсене хутшăну задачисемпе условийĕсене кура туллин те тĕрĕс палăртни; монологла тата диалогла пуплев тунă чухне тăван чĕлхен грамматика нормисемпе тĕрĕс усă курни.

## 6. Программа тытаме

**Çыхăнуллă пуплев.** Пуплевĕн пурнăçри пĕлтерĕшĕ.

Текст. Ăна темăпа çыхăнман предложенисен пуххипе танлаштарасси. Текстра мĕн çинчен каланине (текст темине) палăртасси. Текста темиçе сыпăка (пая) уйăрасси. Пысăках мар текста, унăн пайĕсене ят парасси.

Ӳкерчĕксемпе ĕçлесси. Ӳкерчĕксем тăрăх ыйтусене хуравласси, предложенисем тăвасси. Вĕсене çырасси.

Изложении çинчен ăнлантарасси.

Ыйтусене ушкăнпа хуравланă, йывăр орфограммăсене асăрхаттарнă хыҫҫăн вĕрентӳҫĕ пулăшнипе 30-45 сăмахлă текст тăрăх изложени ҫырасси.

Ачасен пурнăҫĕпе ҫыхăннă темăсемпе (вăйă выляни, вăрмана экскурсие кайни, кама та пулин пулăшни, шкул ҫинчен) 4-5 предложенирен тăракан пĕчĕк калав тăвасси.

**Пуплев этикечĕ**. Сывлăх сунни. Сывлăх суннă чух усă куракан тараватлăх сăмахĕсемпе сăмах майлашăвĕсем. Паллашу сăмахĕсемпе предложенисем. Сăпайлăн тав тума пĕлесси. Сыв пуллашу сăмахĕсем.

**Ĕҫ хучĕсем**. Ансат пĕлтерӳ хайласси. Юлташ патне ҫыру ҫырасси.

**Чĕлхене ансат тишкересси, терминсемпе усă курасси**

**Алфавит**. Саспаллисен ячĕсем тата йĕрки. Уҫă тата хупă сасăсем. Хытă тата ҫемҫе сасăсем.

Пĕр-пĕр саспаллипе пуҫланакан сăмахсене словарьте шыраса тупма вĕрентесси. Сăмахсене алфавит йĕркипе вырнаҫтарма хăнăхтарасси (пуҫламăш сас палли тăрăх).

**Япалана пĕлтерекен сăмахсем**. Вĕсене кам? тата мĕн? ыйтусем тăрăх тупасси.

**Япала ĕҫне пĕлтерекен сăмахсем**. Вĕсене мĕн тăвать? мĕн тăвĕ? мĕн турĕ? ыйтусем тăрăх тупасси.

**Япалан тата унăн ĕҫĕн паллине пĕлтерекен сăмахсем**, вĕсене мĕнле? ыйту тăрăх тупасси.

**Сăмахсене вĕсен пĕлтерĕшĕсене кура ушкăнласси**. Хирĕҫле _пĕлтерĕшлĕ сăмахсем (хура - шурă, пысăк - пĕчĕк, сарлака - ансăр, пылак - йӳҫĕ). Ĕывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсем: васка - хыпалан, кил - пыр, усал - хаяр, аван - лайăх, илемлĕ - хитре, чипер.

**Лексикăпа тематика ушкăнĕсем**: а) тĕс ячĕсем (хĕрлĕ, сарă, шурă, хура, хăмăр, кăвак т.ыт.те; ҫӳрен, турă, хăла, ула, сарă-хăла (лаша ҫинчен); ă) ҫынна хаклакан сăмахсем (чипер, илемлĕ, тирпейлĕ, тăрăшуллă, ĕҫчен, кахал, наян, мăнтăр, начар т.ыт.те).

**Предложени**. Пуплеври предложенисене уйăрасси (маларах вĕреннине ĕирĕплетесси). Предложенин тĕп (подлежащипе сказуемăй) тата кĕҫĕн членĕсем (ячĕсене асăнмасăр).

Тĕрлĕ калăплă (тытăмлă) предложенисем тума тата ҫырма хăнăхтарасси. Вĕсене (кам? мĕн? камăн? мĕнĕн? кама? мĕне? камра, мĕнре? камран? мĕнрен? кампа? мĕнпе? камсăр? мĕнсĕр? камшăн? мĕншĕн?) ыйтури сăмахсемпе анлăлатасси.

**Пунктуаци**. Предложени вĕҫне пăнчă, ыйту тата кăшкăру паллисем лартасси.

**Орфографи**. 1) Хытă уĕă сасăллă сыпăк е сăмах вĕҫĕнчи [л'], [н'], [т'] сасăсене л, н, т саспаллисем хыҫҫăн ҫемҫелĕх палли (ь) ҫырса палăртасси.

2) Уйăракан ҫемҫелĕх палли (ь) ҫырасси.

3) Вăрăм хупă сасса икĕ пĕр пек сас паллипе палăртасси.

4) Сăмаха пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куҫарасси.

5)Çын ячĕпе хушаматне тата ашшĕ ятне, выльăхсемпе чĕр чунсен уйрăм ячĕсене, хула, ял, урам, юхан шыв ячĕсене пысăк саспаллирен пуçласа çырасси.

6) Вырăс чĕлхинчен йышăннă хăш-пĕр сăмахсене вырăс чĕлхинчи пекех çырасси.

**Пуплев ĕçĕн тĕсĕсем**

**Итлесси.** Ачасем вĕрентекен хушăвĕсемпе кĕске пĕлтерĕвĕсене тата юлташĕсем каланисене итлесе ăнланасси.

Текст содержанине туллин ăнланса илмелли пĕлӳсене тата хăнăхусене аталантарасси.

Текстăн тĕп содержанине ăса хывса ăнланмалли пĕлӳсемпе хăнăхусене аталантарасси.

**Калаçасси.** Çанталăк çинчен каласа парасси (халĕ мĕнле çанталăк: ăшă е сивĕ, çумăр, юр çăвать е уяр, хĕвел пăхать т. ыт. те), çулталăк вăхăчĕсем (пĕр-пĕр вăхăтра çутçанталăкăн мĕнле пулăмĕсем палăраççĕ: çумăр, юр; ачасем çулталăкăн ку е вăл вăхăтĕнче мĕн-мĕн тăваççĕ).

Пĕр класра вĕренекен ача çинчен каласа парасси: вăл миçере, унăн сăнĕ-пичĕ, тумтирĕ, вăл мĕн тума юратать. Юратнă уяв (мĕнле уяв вăл, хăçан килет, ăна мĕнле паллă тăваççĕ), юратнă апат-çимĕç.

Кĕске калавсем хăйласси: çулла ăçта пулни, унта мĕн курни çинчен, мĕн-мĕн ĕçлени, сывлăха епле çирĕплетни çинчен. Шкул çинчен, кружоксем çинчен, юратнă учительсем, вĕренӳ, расписани çинчен (хăш-хăш кун мĕнле предметсем пулаççĕ). Мĕн тума юратни çинчен, килти юратнă чĕр чун çинчен (мĕн ятлă, миçере, кăмăлĕ, кĕлетки мĕнле, унăн тĕсĕ, мĕн-мĕн çитеретĕн ăна). Зоопаркра курнă пĕр-пĕр чĕр чун çинчен.

Юлташа (пĕр класра вĕренекене) ăçта та пулин каймашкăн чĕнме, сĕннипе килĕшме е хирĕçлеме хăнăхасси. Юлташран ерçӳллĕ вăхăтра мĕн-мĕн туни, мĕн тума кăмăллани, ӳссен кам пулма ĕмĕтленни çинчен ыйтса пĕлесси. Çуллахи кану, юратнă уяв (ăна епле ирттерни) çинчен калаçасси. Пĕр-пĕрне, пĕлĕшсене, хурăнташ-тăвансене саламлама, ырă сунма, саламланине хуравлама хăнăхасси.

Вуланă текст тăрăх ыйтусем парасси, унăн содержанийĕпе килĕшӳллĕн калаçма хутшăнасси.

Сĕннĕ йĕрке тăрăх текст содержанине каласа парасси, ыйтуллă предложенисенчен, тĕп сăмахсенчен тата çирĕплетӳ пуплевĕнчен тăракан план хатĕрлесси.

Вуланине тата курни-илтнине сӳтсе явмалли пĕлӳсемпе хăнăхусене аталантарасси.

Текст содержанине сăмахпа уçса парасси

Текста улăштармалли пĕлӳсемпе хăнăхтарусене йĕркелесси.

Панă тĕслĕхсем тăрăх диалогсем йĕркелесси.

Диалогсем тăрăх инсценировкăсем хатĕрлесси.

Ӳкерчĕк тăрăх пурте пĕрле, пĕчĕк ушкăнпа е уйрăмшарăн калав хатĕрлесси.

**Вуласси.** Сасăпа вулас ăсталăха ÿстересси. Ăсра вуламалли хăнăхăва аталантарасси.

Сăмах вĕççĕн ăса хывнă сăмахсене тата сăмах çаврăнăшĕсене вуласа ăнланасси.

Вĕренÿ тексчĕсене ăсра е сасăпа вуласси, вĕсенчен кирлĕ информацие суйласа илесси, кирлĕ май страница вĕçĕнчи асăрхаттарусемпе, словарьсемпе усă курасси.

Вĕренÿ тексчĕсене ăсра е сасăпа вуласси, вĕсенчен кирлĕ информацие ăса илесси, унпа харпăр хăй пуплевĕнче усă курасси, çавăн пекех, чĕлхе материалне сăнаса, сăмахсене мĕнле каланине тата çырнине, сăмах пулăвĕн çыхăнăвĕсене, сăмах улшăнăвĕн сăлтавĕсене палăртасси.

Вĕренÿ тексчĕсене ăсра е сасăпа вуланă май вĕсен пĕтĕмĕшле пĕлтерĕшне ăнланса илесси.

Темиçе палламан сăмахлă вĕренÿ тексчĕсене ăсра вуласси, вĕсен содержанине туллин тĕрĕс ăнланса илесси, текста пĕлтерĕшлĕ пайсене уйăрасси.

Текстсене ят парасси.

Кирлĕ мар информацие сирсе хăварса, текстсене кĕскетесси.

Текст содержанине ыйтусем тăрăх, планпа килĕшÿллĕн, тĕп сăмахсемпе пуплерĕшсем тăрăх каласа парасси, çавна май глаголсен сăпат тата вăхăт формисене улăштарасси.

Тÿрĕ пуплевлĕ текстсене вуласси.

Сăвăсене илемлĕн вуласси, вĕсене пăхмасăр калама вĕренесси. Диалогсене кирлĕ интонаципе вуласси.

**Чĕлхене ансат тишкересси, терминсемпе усă курасси.**

Алфавит. Саспаллисен ячĕсем тата йĕрки. Уçă тата хупă сасăсем. Хытă тата çемçе сасăсем.

Пĕр-пĕр саспаллипе пуçланакан сăмахсене словарьте шыраса тупма вĕрентесси. Сăмахсене алфавит йĕркипе вырнаçтарма хăнăхтарасси (пуçламăш саспалли тăрах).

Япалана пĕлтерекен сăмахсем. Вĕсене *кам?* тата *мĕн?* ыйтусем лартса тупасси.

Япала ĕçне пĕлтерекен сăмахсем. Вĕсене *мĕн тăвать? мĕн тавĕ? мĕн турĕ?* ыйтусем лартса тупасси.

Япалан тата унăн ĕçĕн паллине пĕлтерекен сăмахсем, вĕсене *мĕнле?* ыйту лартса тупасси.

Сăмахсене вĕсен пĕлтерĕшĕсене кура ушкăнлассн. Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсем *(хура - шурă, пысăк - пĕчĕк, сарлака - ансăр, пылак - йÿçĕ)*. Çывах пĕлтерĕшлĕ сăмахсем: *васка - хыпалан, кил - пыр, усал - хаяр, аван - лайăх - чипер; илемлĕ - хитре.*

Лексикапа тематика ушкăнĕсем: а) тĕс ячĕсем *{хĕрлĕ, сарă, шурă, хура, хăмар, кăвак* т.ыт.те; *çÿрен, турă, хăла, ула, сарă- хăла* (лаша çинчен);

б) çынна хаклакан сăмахсем *(чипер, илемлĕ, тирпейлĕ, тăрăшуллă, ĕçчен, кахал, наян, мăнтăр, начар*т.ыт.те).

Предложени. Пуплеври предложенисене уйăрасси (маларах вĕреннине çирĕплетесси). Предложенин тĕп (подлежащипе сказуе- мăй) тата кĕçĕн членĕсем (ячĕсене асăнмасăр).

Предложенисем тума тата вĕсене çырма хăнăхтарасси. Предложенисене ыйтусем *(кам? мĕн? камăн? мĕнĕн? кама? мĕне? камра? мĕнре? камран? мĕнрен? кампа? мĕнпе? камсăр? мĕнсĕр? камшăн? мĕншĕн?)* лартса анлăлатасси.

Пунктуаци. Предложени вĕçне пăнчă, ыйту палли тата кăшкару палли лартасси.

Орфографи.

1) Хытă уçă сасăллă сыпăк е сăмах вĕçĕнчи [л′], [н′], [т′] сасасене *л, н, т* саспаллисем хыççăн çемçелĕх палли *(ь)* çырса палăртасси: *выльăх, кукăль, супăнь, макăнь, халь, ахаль, макăль, шукăль; ларать, вылять, чупать, тăрашать.*

Уйăракан çемçелĕх палли (ь) çырасси: *мăрье, кĕсье, тухья, Марье.*

Варăм хупă сасса икĕ пĕр пек саспаллипе палăртасси:

ăру-тăванлăх сăмахĕсенче: *атте, анне, асатте, шăллăм, аппа,*

*кукка, мăн акка;*

çулталăк вăхăчĕсен ячĕсенче: *çулла, хĕлле, кĕркунне, çуркунне;*

хальхи вăхăтри нумайлă хисепри 3 сăпатри глаголсен формисенче: вулаççĕ, вуламаççĕ, ĕçлеççĕ, ĕçлемеççĕ, выляççĕ, вылямаççĕ.

Сăмаха пĕр йĕркерен тепĕр йĕркене куçарасси: *ма-ши-на, вы-ля, япа-ла, пĕ-лĕт-сем.*

Çын ячĕпе хушаматне тата ашшĕ ятне, выльăхсемпе чĕр чунсен уйрăм ячĕсене, хула, ял, урам, юхан шыв ячĕсене пысăк саспаллирен пуçласа çырасси: *Иванова Мария Васильевна, Михайлов Иван Викторович, Мăрмăр, Кампур, Улайкка, Аньяр, Хураçка, Канаш, Шупашкар, Шурча, Çавал, Кĕçĕн Çавал, А тăл, Сĕве.*

Вырăс чĕлхинчен йышăннă хăш-пĕр сăмахсене вырăс чĕлхинчи пекех çырасси: *а) Миша, Наташа, Коля, Петя, Таня;*

*а) машина, трактор, комбайн, завод, фабрика, самолёт, ракета;*

*б)парта, учитель, директор; в) колхоз, ферма, сад, дыня, помидор; г) кухня, стакан, щётка.*

Таса та илемлĕ çырасси

Çыру гигиени хăнăхăвĕсене (тĕрĕс ларма, тетраде хума, ручкăна тытма т.ыт.те пĕлнине) çирĕплетесси.

Пĕчĕк саспаллисене йывăрлăх енчен ушкăнласа (5 ушкăн) çырасси: *1) и, ш, г, п, т, й, н, р, у, ў; 2) л, м, ц, щ, ь, ы; 3) а, ă, ю, ф, д, б, я; 4) с, ç, е, ĕ, ё, ч, ъ, в; 5) э, х, ж, к.*


ЭЛЕКТРОННЫЙ ТАТАРСТАН

Пысăк саспаллисене йывăрлах енчен ушкăнласа (4 ушкăн) Çырасси: *1) Й, И, Ш, Ц, Щ, Ч, Ы, Д М, А, Ă; 2) О, С, Х, Б, Е. Ĕ, Ё, Ц 3, Э, Я; 3) Ж, У, Ӳ, Н, К, Ю, Р, Д Ф; 4) Г, Д Т, Б, Д.*

Таса та илемлĕ, тĕрĕс çырмалли сăмахсем: *алсиш, анне, аппа, асатте, атте, ăмăрт кайăк, библиотека, больница, выльăх, вырсарни кун, герой, дежурнăй, ешчĕк, ёлка, журнал, йăмак, кĕçнерни кун, кĕркунне, кĕсье, класс, класра, колхоз, коньки, комбайн, комбайнер, кукамай, кукаçи, кукка, лётчик, майка, мунча, пан улми, пичче, ракета, самолёт, çулла, çуркунне, тăвайкки, тетрадь, трактор, тунти кун, тыр пул, улмуççи, учитель, учительница, ухĕ, физкультура, хĕлле, чăх- чĕп, шăллăм, шăмат кун, щётка, ытлари кун, эрне кун, юлан ут, юн кун, ялав.*

## Тематика плане чаваш челхи урокесен

УМК Л.П. Сергеев, Т.В. Артемьева. Чаваш челхи, 2 класс, Чебоксары: Чувашское книжное издательство

| № п/п | Урок теми | Примечание. Ачасемпе ĕçлесси | Вахат | |
|---|---|---|---|---|
| | | | План. | Факт. |
| | **Саса тата сас палли – 16 с.** | | | |
| 1. | Предложени. Сăмах. (с. 3-4) | Предложенипе самах синчен 1-меш класра вереннине аса илесси. Сутсанталака, Таван сершыва юратма верентесси. | | |
| 2. | Сасă тата сас палли. (с.5-6) | Сасасемпе сас паллисем синчен аса илесси. Варманти чер-чунсене сыхлама упрама верентесси. | | |
| 3. | Сăмахсенче пысăкла сас палли çырасси. (с. 7-9) | Самахсенче пысакла сас палли сырмалли синчен аса илесси. Хамар сершыври космонавтсем синчен каласу ирттересси. | | |
| 4. | Алфавит. (с..10-13) Илемле сыру. | Алфавит синчен аса илесси. Алфавит пурнасра мен тума кирлине анлантарасси. | | |
| 5. | Уçă сасăсемпе хупă сасăсем. (с. 13-16) | Уса сасасемпе хупа сасасене аса илесси. Килти выльах-черлехсене юратмалли тата весене пахмалли синчен пелтересси. | | |
| 6. | **Тереслев диктанче.** (1-мĕш кл. | Сасасемпе сас паллисем синчен аса илесси. Вырас челхипе сыхану тытасси | | |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | вĕреннине аса илни) | | | |
| 7. | «Терес сыратпар».<br>Хытă уçă сасăсемпе çемçе уçă сасăсем | Хыта уса сасасемпе семсе уса сасасене аса илесси. Тупмалли юмахсемпе еслесси, вайа ирттерессси. Вырас челхипе сыхану тытасси | | |
| 8. | Хытă хупă сасăсемпе çемçе хупă сасăсем. | Хупа сасасене аса илесси. Пахча симессем синчен каласу ирттерессси. Пирен тавралах урокепе сыхану тытасси. | | |
| 9. | Хытă уçă сасăллă сăмахсенче çемçелĕх палли (ь) çырасси.(с. 27-29) | Хыта тата семсе уса сасасене аса илесси. Кил-суртра атте-аннене пулашмалли синчен каласу ирттерессси. | | |
| 10. | Хытă уçă сасăллă сăмахра -ю-, -я- çырасси.(с. 30-31 ) | Хыта тата семсе уса сасасене аса илесси. Кашни ачан дневникесене тирпейле тытмалли синчен каласу ирттерессси. | | |
| 11. | Уйăракан çемçелĕх палли (ь) çырасси.<br>(с. 32-33) | Уйаракан семселех пали (ь) синчен аса илесси. Тетрадьсем синче илемле сырмалли синчен каласу ирттерессси. | | |
| 12. | Вăрăм хупă сасса икĕ пĕр пек сас палли çырса палăртни.(с. 33-36) | Варамман илтенекен хупа сасасем синчен аса илесси. Вырас челхинчи правиласене аса илесси. Пыл хурчесем синчен каласу ирттерессси. Пирен тавралах, вырас челхи урокесемпе сыхану тытасси | | |
| 13. | Вăрăм хупă сасса икĕ пĕр пек сас палли çырса палăртни. | | | |
| 14. | Вырăс чĕлхинчен<br>йышăннă хăш-пĕр сăмахсене çырасси.<br>(с. 39-42) | Янравла хупа сасалла самахсене аса илесси.<br>Вырас челхипе сыхану тытасси. Хамар таврари халахан самахлахепе паллаштарасси. | | |
| 15. | Орфографи словаре. Самах диктанче. | Орфографи словарепе еслесси. | | |
| 16. | «Сасă тата сас палли» темапа **терeслев диктанче.** | Диктант «Шкул ачи» е «Хура керкунне» (Таван челхе урокесем) | | |
| | **Самах. Япала яче – 15 с.** | | | |
| 17. | «Терес сыратпар». Сăмах сыпăкĕ.<br>(с. 45-47) | Вырас челхинчи правиласене аса илесси. Вырас челхипе сыхану тытасси | | |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 18. | Сӑмахсене пӗр йӗркерен тепӗр йӗркене куçарасси.(с. 48-50) | Уса сасасем синчен аса илесси. Пирен тавралах урокепе сыхану тытасси. | | |
| 19. | Текст.<br>(с. 51-54) | Текст синчен мен вереннине аса илесси. Шыва кене чухнехи асархатарусемпе паллаштарасси. ОБЖ урокепе сыхану тытасси. | | |
| 20. | Кам? Мӗн? ыйтуллӑ сӑмахсем.<br>(с. 55-64) | Чере тата черемар япаласем синчен аса илесси. Пирен тавралах урокепе сыхану тытасси. Сывлахла пулма, ана упрама верентесси. | | |
| 21. | Кам? Мӗн? ыйтуллӑ сӑмахсем. | | | |
| 22. | Пер япалана пелтерекен сӑмахсем.<br>(с. 63-66) | Вырас, тутар челхинче пер япалана пелтерекен самахсене танлаштарасси. Вырас челхипе тата тутар челхипе сыхану тытасси. | | |
| 23. | Япала нумаййине пӗлтерекен сӑмахсем.<br>(с. 66-68) | Вырас, тутар челхинче нумай япалана пелтерекен самахсене танлаштарасси. Вырас челхипе тата тутар челхипе сыхану тытасси. | | |
| 24. | Çын ячӗсене, хушамачӗсене, ашшӗ ячӗсене пысӑк сас паллинчен пуçласа сырасси. (с. 69-70) | 1-меш класра вереннине аса илесси. Куршесемпе тусла пуранмалли синчен каласу ирттересси. | | |
| 25. | Выльӑх –чӗрлӗх ячӗсене пысӑк сас паллинчен пуçласа çырасси.(с. 72-76) | Килти выльах-черлехсене аса илесси. «Печек юлташсемпе» тусла пуранмалли синчен каласу ирттересси. Пирен тавралах урокепе сыхану тытасси | | |
| 26. | Сочинени «Печек тус». | Укерчеке санаса печек калав йеркелесси. | | |
| 27. | Хула, ял, урам, юхан шыв ячӗсене пысӑк сас паллинчен пуçласа çырасси. | Хамар таврари ялсемпе хуласен ячесене аса илесси. Таван яла юратма, упрама верентесси. Курше ялсемпе тусла пуранма верентесси. | | |
| 28. | Хула, ял, урам, юхан шыв ячӗсене пысӑк сас паллинчен пуçласа çырасси. | Хамар таврари ялсемпе хуласен ячесене аса илесси. Таван яла юратма, упрама верентесси. Курше ялсемпе тусла пуранма верентесси. | | |
| 29. | «Сӑмах, япала ячӗ» темапа **тереслев диктанче.** | Япала яче синчен аса илесси. Илемле сырмалли синчен каласасси. | | |
| 30. | Изложени «Ике качака таки». | Текста пайсем сине уйарма пелесси. Текста терес сырса пама веренесси. | | |


ЭЛЕКТРОННЫЙ ТАТАРСТАН

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 31. | «Терес сыратпар»Ианашсене турлетни. Самах. | Изложенинчи тата диктантри йанашсене тупса анализласси. | | |
| | **Глагол – 13 с.** | | | |
| 32. | Мĕн тăвать? Мĕн тăваççĕ? ыйтури глаголсем. (с. 85-86) | Есе пелтерекен самахсене аса илесси. Глаголсене уса курса сава сырма верентесси. Таван самах урокепе сыхану тытасси. | | |
| 33. | Глаголсенче (ь) палли çырасси.<br>(с. 87-89) | (ь)-палли синчен аса илесси. Есчен пулма верентесси. Кил-суртра атте-аннене пулашмалли синчен каласу ирттересси. | | |
| 34. | Мĕн таваççĕ? ыйтури глаголсем.<br>(с. 90-94) | Вырас челхинчи глаголсем синчен аса илесси. Вырас челхипе сыхану тытасси.Уроксене вахатла хатерлемелли синчен каласу ирттересси. | | |
| 35. | Мĕн турĕ? Мĕн турĕç? ыйтури глаголсем.<br>(с. 95-100 ) | Иртне вахатри, перрелле хисепри глаголсем синчен веренните аса илесси. Пурнасра чеелех те кирле пулни синчен каласу ирттересси. Амартура пултарулла пулма верентесси. Физкультура урокепе сыхану тытасси. | | |
| 36. | Мĕн турĕ? Мĕн турĕç? ыйтури глаголсем. | Пурнасра чеелех те кирле пулни синчен каласу ирттересси. Амартура пултарулла пулма верентесси. Физкультура урокепе сыхану тытасси. | | |
| 37 | Мен тавать? Мен туре? Ыйтури глаголсем. | Хальхи вахатри глаголсен ыйтавесене аса илесси. Иртне вахатри, перрелле хисепри глаголсем синчен веренните аса илесси | | |
| 38. | Сочинени «Манан юлташ». | Глаголан ыйтавесене аса илесси. Кун йеркипе паллаштарасси, пурнасра сиреп чунла пулма верентесси | | |
| 39. | Йанашсене турлтни. Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ глаголсем. | Есе пелтерекен самахсене аса илесси. Глаголсене уса курса сава сырма верентесси. Таван самах урокепе сыхану тытасси. | | |
| 40. | Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ глаголсем.<br>(с. 103-106) | Пирен тавралах урокепе сыхану тытасси. Глаголсене уса курса сава сырма верентесси. | | |
| 41. | Пĕрешкел е çывăх пĕлтерĕшлĕ глаголсем.(с. 107-111) | Пирен тавралах урокепе сыхану тытасси. | | |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 42. | Пĕрешкел е çывăх пĕлтерĕшлĕ глаголсем. | Есе пелтерекен самахсене аса илесси. Глаголсене уса курса сава сырма верентесси. Таван самах урокепе сыхану тытасси. | | |
| 43. | Изложени «Шура кавакарчан». | Текста терес сырса парасси. | | |
| 44. | «Глагол» темапа **тереслев диктанче.** | Диктант сырасси, тереслесси, йынашсене тупасси. | | |
| | **Палла яче – 10 с.** | | | |
| 45. | «Терес сыратпар».<br>Япала паллине пĕлтерекен сăмахсене мĕнле? ыйту лартса тупасси.(с.117-122) | Тереслев есенче туна йанашсене тупса анализласси. Япаласен паллисене санласси, ыйтавесене ответлесси. Менле? Ыйтури самахсем синчен веренние аса илсе сиреплетесси. | | |
| 46. | Япала паллине пĕлтерекен сăмахсене мĕнле? ыйту лартса тупасси. | Менле? Ыйтури самахсем синчен веренние аса илсе сиреплетесси. | | |
| 47. | Тĕсе пĕлтерекен сăмахсем. (с. 122-127) | Палласем тарах япалине тупасси. | | |
| 48. | Тĕсе пĕлтерекен сăмахсем. | Палласем тарах япалине тупасси. | | |
| 49. | Çынна сăнлакан сăмахсем. (с. 127-128) | Ханахтарусем пурнасласси. Пуплеве аталантарасси. | | |
| 50. | Тереслев. есе. Сыру сырасси. | Сыру сырма веренесси | | |
| 51. | Хирĕçле пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕсем (антонимсем).(с. 133-135) | Самахсенчен предложенисем тавасси. Вереннине сиреплетесси. | | |
| 52. | Пĕрешкел пĕлтерĕшл паллă ячĕсем (синонимсем). (с. 135-139) | Сене материалпа еслени. Вереннине аса илсе сиреплетни. | | |
| 53. | «Паллă ячĕ». Вереннине сиреплетни. | Текстра палла ячесене терес тупасси | | |
| 54. | «Палла яче» темапа **тереслев диктанче.** | Диктант сырасси. Палла ячесене тупасси. | | |
| | **Предложени -7 с.** | | | |
| 55. | Пуплеве предложенисем çине уйăрасси.<br>(с. 140-143) | Текстри предложенисене уйарма веренни, весне панча, ыйту тата кашкару палли лартмаллине аса илесси. | | |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 56. | Предложенин тĕп членĕсемпе кĕсĕн членĕсем. (с. 144-149) | Пуплеврен предложенисене уйарса илесси, теп членесене тупма ханахасси. | | |
| 57. | Предложенин тĕп членĕсемпе кĕсĕн членĕсем. (с. 144-149) | Пуплеврен предложенисене уйарса илесси, теп членесене тупма ханахасси. | | |
| 58. | Предложени членĕсем хушшинчи çыхăну. | Теп членсене аялтан йерсем туртса пала туни, весен ыйтавне каласа пани. | | |
| 59. | Предложени членĕсем хушшинчи çыхăну.(с. 149-154) | Теп членсене аялтан йерсем туртса пала туни, весен ыйтавне каласа пани. | | |
| 60. | Калуллă, ыйтуллă предложенисем. (с.155-156) | Доска синче сырна текстра предложенисене уйарни, ана чарану паллисем лартса сырса илни. | | |
| 61. | Кăшкăруллă предложенисем. | Предложени весенче кашкару палли лартасси. Кашкарулла предложенисене интонаципе терес вуласси. | | |
| | **Вереннине аса илни -7 с.** | | | |
| 62. | Сасăсемпе сас паллисем, алфавит çинчен вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси.(с. 163-165) | Алфавит синчен вереннине аса илсе петемлетесси. | | |
| 63. | Япала ячĕ, глагол тата паллă<br>ячĕ çинчен вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси (с. 165-173). | Хайсем теллен еслени. Самахсене, кирле пек улаштарса, предложени тытамне кертни, пуплев пайесене палартни. | | |
| 64. | Япала ячĕ, глагол тата паллă<br>ячĕ çинчен вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси | Хайсем теллен еслени. Самахсене, кирле пек улаштарса, предложени тытамне кертни, пуплев пайесене палартни. | | |
| 65. | Предложени çинчен вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси (с. 174-180) | Выранесене улаштарса пана предложенисене йеркелесе, калав сырни, ана ят пани. | | |
| 66. | Тереслев есе. Словарь диктанче.<br>**Терес те илемле сырса илесси.** | Текста илемле те терес сырма пелесси. | | |


ЭЛЕКТРОННЫЙ ТАТАРСТАН

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 67. | Петемешле т**ереслев тестировани.** | Тестсемпе терес еслесси. | | |
| 68. | «Терес сыратпар»<br><br>2-мĕш класра вĕреннине петемлетни. | Вереннине аса илсе сиреплетесси. | | |



ЭЛЕКТРОННЫЙ ТАТАРСТАН

Лист согласования к документу № 20уч2023 от 14.09.2023
Инициатор согласования: Курмышкина И.Н. Директор
Согласование инициировано: 14.09.2023 11:46

**Лист согласования** Тип согласования: **последовательное**

| N° | ФИО | Срок согласования | Результат согласования | Замечания |
|---|---|---|---|---|
| 1 | Курмышкина И.Н. | | Подписано 14.09.2023 - 11:47 | - |